Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă. | 93 N (4662) | *1998 çулхи август (çурла) уйăхĕн 15-мĕшĕ, шăматкун* | *Палăртнă хакпа.*

● *Ял хуçалăхне реформăлассин çул-йĕрĕпе*

"Агрофирмăна суйласа илетпĕр!"

Районта хуçалăха тытса пымалли çĕнĕ формăсем - агропромышленность секторне реформăласси малалла пырать. Аграрниксем хуçалăха тытса пымалли суйласа илнĕ черетлĕ вариант - агрофирмăсем. Августăн 13-мĕшĕнче районти икĕ ялта - Якуркелĕнче тата Кукăркӳлĕнче - пухусем пулчĕç, вĕсенче çĕнĕ структурăсем йĕркелесси çинчен решени йышăнчĕç.



Çав кун Якуркелĕнчи культура çуртĕнче Кузнецов ячĕпе хисепленекен тата Мичурин ячĕпе хисепленекен хуçалăхсен ĕçченĕсем пуçтарăнчĕç. Нурлат хулипе район администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин вĕсемпе калаçу ирттерчĕ.

- Пирĕн çак йывăр вăхăта сиен кӳмесĕр тата тăкаксем сахал кăларса мĕнле тӳссе ирттермелле-ши? Çакна сӳтсе явма пуçтарăнтăмăр та эпир паян, - çапла пуçларĕ вăл хăйĕн сăмахне.

Хальхи условисенче социаллă ыйтусене татса парасси, ĕçшĕн тӳлесси кунсерен кăткăсланнине палăртса, Фатих Саубанович ансат мар условисенче те производствăна аталантарас тата çĕнĕ вăйлă специалистсем пулĕç. Сăмахран, Якуркелĕнче сысна ĕрчетессинче пухнă пуян опытпа хăмăшлăсем усă курĕç, сĕт суса илессинчи вĕсен ăсталăхĕпе - хуралтусем, агрономи пĕлĕвĕсене Якуркелĕнче тата Хуралтăвĕнче сарма май пулĕ. Иккĕмĕшĕнчен, çĕрпе, техника ресурсĕсемпе, ĕç вăйĕпе тухăçлă усă курма май пулĕ. Ку технологи требованийĕсене пурнăçлассине, акмалли структурăна пăхăнассине тата ыттине те тивет.

Пысăк хуçалăхсене рынок условийĕсенче хăйсен продукцине тупăшлă сутмалли çул-йĕрсем шырама çăмăлрах пулĕ.

Çĕнĕ пĕрлешĕвĕн структурине Фатих Саубанович çапларах ăнлантарса пачĕ: ĕçе агрофирма директорĕ ертсе пырĕ, анчах кашни кооперативăн хăйĕн хуçалăх расчечĕ пулĕ тата ĕçе хуçалăх расчечĕпе илсе пырĕç. Çапла майпа, кашни хăйĕн ĕçĕн юлашки результачĕсемшĕн тăрăшĕ тата ăна тупăшлă тăвĕ (тĕслĕх вырăнне пуçлăх "Москва" хуçалăх бази çинче йĕркеленĕ Куракъел хуçалăхне илсе кăтартрĕ). Расчет, отчетлăх, дисциплина, хăйтĕллĕнлĕх - çак пахалăхсем çĕнĕ структурăшăн уйрăмах хаклă.

Залран илтĕннĕ сасăсем ял çыннисем малашнехи пурнăç çинчен шухăшланине тепĕр хут çирĕплетрĕç. Пĕр вырăнта тăракан тапхăр якуркелсене те пăшăрхантарнине ăнланмалла ĕнтĕ - маларах, "Россия" колхоз чухне нушасăр пуррăннине хуралтусем манаймаççĕ-ха, çавăнпа та çакăн пек пурнăçран йăлăхнă вĕсем. Тен, кӳршĕсем-ре, ыранхи куна çирĕп шанаканскерсемпе, пĕрлешсен, вĕсен малашлăхĕ те шанчăклă пулĕ? Çак шанăç ял çыннисен шăпине татса пачĕ: вĕсем агрофирма пĕрлешме пĕр саслăн пулса йышăнчĕç, шăп кăна çакă вĕсене агрофирма "Надежда" ят пама хистерĕ. Агрофирма ертӳçи пулма кооперативсен пĕрлешĕвĕн председательне Ильяс Мухамметова суйларĕç.

- Шаннăшăн тавтапуç. Хам та ĕçлĕп, сире те ĕçлеттерĕп. Манăн халех ĕнтĕ пысăк шухăш пур, ăна пĕрле пурнăçа кĕртĕпĕр, - терĕ вăл хăйĕн кĕске каласăвĕнче.

Çапла майпа, районта хуçалăха тытса пымалли тата тепĕр формăпа усă курма тытăнăç. Фатих Саубанович çĕнĕ пĕрлешӳ членĕсене темиçе вариант сĕнчĕ: мĕншĕн тĕп мастерской тумалла мар-ха? Консервлакан тата аш-какай тĕтĕмлекен цехсене мĕншĕн ĕçлеттермелле мар? Продукцие вырнаçтармалли вырăнсем шырассине активлатмалла. Пуçлăх каланă сăмахсем ял çыннисен чĕрисенче шанăç çуратни тӳрех палăрчĕ. Шанăç пулсан, ăнăçлăх та пулать.

* * *

Çав кун Кукăркӳл ялĕнчи культура çуртĕнче те пуху пулчĕ, унта хресченсен хуçалăхĕсен "Родина", "Черемшан", "Заря" ассоциацийĕсен представителĕсем хутшăнчĕç. Ăна хула тата район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Ю.В.Терентьев илсе пычĕ. Пĕрлехи решение тĕпе хурса тата тепĕр агрофирма йĕркелерĕç, ăна "Черемшан" ят пачĕç. Унăн ертӳçи пулма Рафис Радикович Хамзина суйларĕç.

Пухăва хула тата район администрацийĕн пуçлăхĕн аппарат ертӳçи Ф.Р.Ногуманова тата халăх депутачĕсен пĕрлештернĕ Совечĕн председателĕн çумĕ А.Н.Ельченков хутшăнчĕç.

С.ХАЙРУЛЛИНА.

С.В.Кириенко - Тутарстанта

Августăн 13-мĕшĕнче РФ Правительствин Председателĕ Сергей Кириенко Тутарстана килнĕ. Хусанти аэропортра хăнана ТР Президенчĕ Минтимер Шаймиев, Премьер-министр Рустам Миннеханов, столица мэрĕ Камиль Исхаков кĕтсе илнĕ.

Çав кун каçхине Хусанти авиаци пĕрлешĕвĕнче пулса курса, Раççей Премьерĕ предприяти ертӳçисемпе тĕл пулнă тата Хусанти самолетсен пахалăхĕпе кăмăллă пулнине пĕлтерсе, предприятие кăткăс лару-тăруран тухма пулăшасса шантарнă.

Çулçӳревре Сергей Кириенко "Пысăк Атăл" Ассоциаци ĕçне хутшăнĕ, автомобильсем туса кăларакан предприятисенче тата производствăн ытти отраслĕсенче пулса курĕ.

"Тухăç-98" пресс-центр ĕçлеттерет

Юлашки кунсенче час-часах çумăр çунипе хирти ĕçсен хăвăртлăхĕ чылай чакрĕ. Анчах та çĕр участокĕсем, вăрлăх, удобрени хатĕрленĕ хуçалăхсенче кĕрхи культурăсем акас ĕç чарăнман. Юлашки икĕ-виçĕ кун хушшинче çак агромероприятие тата вунна яхăн хуçалăх пурнăçлама тытăннă. Ĕнерхи кун тĕлне хресченсен хуçалăхĕсен Хафизов ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕнче 175 гектар çине ыраш акнă, "Рассвет" - 150, "Киклĕ" - 130, Мичурин ячĕпе хисепленекен, "Сĕнче", Синдряков ячĕпе хисепленекен тата "Тĕрнеç" хуçалăхсенче - 100-120-шер гектар.

Çак вăхăт хушшинче хресченсен хуçалăхĕсен "Киклĕ" ассоциацийĕнче çурхи тулла 40 гектар çинчен çапса илме пултарнă. Çак ĕçе "Комбайн" тата "Кондурча" хуçалăхсенче те пурнăçланă. Çумăр часчасах çунипе хирти ĕçсене анлăн пурнăçлама май çук.

Çĕртме сухалакан агрегатсем вара пушă тăмаççĕ. Çакăн пек начар çанталăкра та вăтамран пиншер гектар çинче çĕр ĕçлесе хатĕрлеççĕ. Çав "Киклĕ" хуçалăхра тата "Сĕнче" ассоциацире çак кунсенче 100 гектар çинче çĕртме сухаланă, "Кондурча" тата Мичурин ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче кашнинче 170-шер гектар çĕр сухаланă. Çакна ĕçе лайăх, шухăшласа пурнăçланипе тунă - агрегатсене хиртен илсе кайман, çĕр кăшт типессе кĕтнĕ.

Нефтебазăн хушма хуçалăхĕнче, хресченсен хуçалăхĕсен "Алга", Хафизов ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕсенче тата ытти хăшпĕр хуçалăхсенче сенаж хывас ĕçе юлашки кунсенче чылай активлатнă. Хресченсен хуçалăхĕсен "Заветы Ильича", "Татарстан" тата "Чулпан" ассоциацийĕсенче витаминлă курăк çăнăхĕ авăртакан агрегатсем ĕçсĕр тăмаççĕ. Чăнах та вĕсенчен пĕремĕшĕнче пĕр условнăй выльăх пуçне апат сахал хатĕрленĕ-ха, çавăнпа та сысна отраслĕ аталаннă хуçалăхра хăть çакăн йышши апата ытларах хатĕрлесе хăварма тăрăшаççĕ. Шел пулин те, çак агрегатсене çу тăршшĕпех пĕрре те ĕçлеттермен хуçалăхсем те пур.

Официаллă хроника

Кадрсем улшăннă

Августăн 12-мĕшĕнче хресченсен хуçалăхĕсен "Алга" ассоциацийĕн ĕçченĕсен пĕрлехи пухăвĕ пулнă. Хуçалăх ертӳçине Р.Р.Хамзина тепĕр ĕçе куçарнипе йышăнакан должноçрен хăтарнă. "Алга" ассоциаци председателĕ пулма Алхат Галиуллович Сунеева суйланă.

Пухăва Нурлат хулипе район администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин хутшăннă тата тухса каласнă. Вăл районăн экономикипе социаллă аталанăвĕнчи ĕçсем çинчен, экономика кризисĕсенчен тухмалли çул-йĕрсем çинчен пĕлтернĕ, районта реформăсем мĕнле иртнине хак панă, çĕнĕ задачăсем палăртнă тата тухăçлă та активлă ĕçлеме чĕнсе каланă.

Ярмăркка пулать

1998 çулхи августăн 20-мĕшĕнче, учительсен кашни çул иртекен канашлăвĕ кунне ярмăркка пулать.

Районта хулари шкулсемпе шкул çулне çитмен ачасен учрежденийĕсем хăйсен участокĕсем çинче акса ӳстерпĕ тухăça, ял хуçалăх продукчĕсене, вăрманти пуян çимĕçе, вĕренекенсемпе ашшĕ-амăшĕсем тунă яшаласене сĕнеççĕ.

Нурлат районĕн вĕренту пайĕ пурне те тавар туянма чĕнет.

Хаксем пасартинчен йӳнерех. 6 сехетре пуçланать.

Ăшă пурне те кирлĕ

Хула уçалăхĕ ĕлĕ хатĕрленет

Халь, хĕвел хĕртсе пăхнă чухне ку темăпа калаçу пуçарма иртерех пек туйăнать. Анчах та ăна та кая хăварма юрамасть: тепĕр уйăхран эпир кĕркуннене кĕретпĕр.

Ăшă сечĕсен Нурлатри предприятийĕ (НПТС) 1997-98 çулхи хутса ăшăтмалли сезона, тĕпрен илсен, ăнăçлă вĕçленĕ: пысăк авари те, вăрах вăхăт хушши ăшă паман тĕслĕх те пулман. Анчах кунта ĕçлекенсем сезон вĕçленнĕ хыççăн çăмăллăн сывласа яма та ĕлкĕреймен, çитес хĕл тĕлне хатĕрленме тытăннă. Тӳрех каласа хăвармалла, вĕсен ĕçĕсем ансат мар, экономика кризисĕ кунта та палăрмасăр пултарайман. Юлашки вăхăтра предприятие ĕçлеме йывăртарах, мĕншĕн тесен унăн балансĕ çине хулари мĕнпур котельнăйсене куçарнă, çапла майпа ĕçсем те, ыйтусем те чылай хушăннă. Вĕсем вара сезон вăхăтĕнче начар енчен ан палăрччăр тесе НПТС вĕсене çулла татса пама тăрăшать, çавăнпа та юсав тапхăрĕ те вĕсемшĕн хутса ăшăтмалли сезон пекех хĕрӳ.

Пĕрремĕш задача

Администраци пуçлăхĕн 1997 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕпе килĕшӳллĕн çуртри шалти ĕçсене пурнăçлассине тата халăхран ăшăшăн укçа пухассине пурне те МППран НПТС куçарнă. Ку вара предприятишĕн хушма йывăрлăхсем каларса тăратать. Пĕрремĕшĕнчен, ăшă сечĕсем питĕ кивелнĕ, чылайăшне тĕпрен юсамалла. Вĕсене пурнăçлама ăçтан укçа илмелле? Ăшă сетĕнче ĕçлекенсем каланă тăрăх, вĕсене ăшăшăн тӳлемелли тарифа кĕртмен. Тăкаксем каларать пулин те, предприяти пĕр тăхтаса тăмасăр çуртри ăшă сечĕсене юсакан 10 çынран тăракан ятарлă бригада йĕркелет. Ку бригада А.Матавин мастер ертсе пынипе Безымяннăй тăкăрлăкра пысăках мар база тăвать те аварисемлĕ лару-тăру çинчен панă заявкăсене талăкĕпех йышăнма тытăнать. Ахаль юсав ĕçĕсене тӳрех пурнăçлаççĕ пулсан, кăткăсраххисене вара уйрăм, çулла тăваççĕ. Бригада валли ĕç çителĕклĕ.

Сăмахран, Гиматдинов урамĕнчи 51-мĕш номерлĕ çурт чи инçетри объект шутланать. Ăшă çитменнипе кунта пурăнакансене ăшăшăн 50 процент çеç тӳлеттерме йышăннă. Акă çу пуçламăшĕнче бригада чăн малтан шăп кăна çавăнта кайнă: çурта кĕрекен пăрăхсене улăштарнă, унта 70 метр пăрăх кайнă. Советская урамĕнчи 183-мĕш номерлĕ çурт путвалĕнче юсав ĕçĕсем ирттернĕ, кунта хĕлĕпе вĕри шыв юхса выртнă. Апрель уйăхĕнчен пуçласа çак бригада хваттерсенчи 260 секцие улăштарнă, вĕсене тасатнă, çунă. Унти-кунти ĕçсене йӳнĕ материалсемпе пурнăçланинче тата тепĕр йывăрлăх пур - путвала кĕме май çук, вăл фекалипе тулнă (коммуналлă юсав ĕçĕсене акă мĕншĕн путвалран тытăннă иккен). Уйрăмах Кăрмăш микрорайонĕнчи лару-тăру йывăр: ăшă пăрăхĕсем те, вĕри шыв паракан пăрăхсем те çĕрсе пĕтнĕ. Нефтьпе газ каларакан "Нурлатнефть" управленин начальникĕ М.М.Хузин вĕсене улăштарма шантарни кăшт та пулин шанăç кӳрет. Çапла майпа, çуртсенчи пăрăхсемпе батарейăсене улăштарасси, ăшă сечĕшĕн пĕрремĕш вырăнта тăракан задача шутланать.

Хула ӳсет, ăшă ăçтан илет?

Иртнĕ хĕлле "Сельхозтехника" микрорайонĕнче пурăнакансем сивве мĕнле чăтса иртерес тесе пурăннине астăватăр пулĕ. Çавăнпа та апрелĕн 14-мĕшĕнче район администрацийĕнче администрацип хула пуçлăхĕн çумĕ Р.Г.Билалов ертсе пынипе иртнĕ канашлура шăп кăна çак микрорайона ăшăпа тата шывпа тивĕçтерес ыйтăва пăхса тухнă. Канашлура конкретлă решени йышăннă: "Сельхозтехникăн" пурăнмалли фондне промышленность базисенчен уйăрмалла. Çуртсене НПТС 2-мĕш котельнăйĕнчен ăшă парассине майласа ямалла. Ун пек тăвас тесен иккĕмĕш котельнăйран 10-мĕш номерлĕ çурт патне çитиччен ăшă трассине 470 метр хывмалла, котельнăйра тепĕр ăшă пункт вырнаçтармалла. Çак ĕçе "Сельхозтехникăн" пурнăçламалла. Хальхи вăхăтра ăшă трассине тума тытăннă, анчах та ăшă пунктне хăпартма та пуçламанха, оборудовани çук теççĕ. Çапла майпа хĕлле кунта пурăнакансен каллех шăнма тӳр ан килтĕрччĕ. Шел пулин те, вĕсем кăна та мар шăнĕç... Хулан çурçĕр микрорайонĕнче 18 хваттерлĕ çĕнĕ çуртсем хăпартаççĕ (халлĕхе вĕсем 8). Тӳрех çакăн пек ыйту тухса тăрать: малтанхи çуртсене сиен кӳмесĕр вĕсене мĕнле ăшăтĕç? Çавăнпа та НПТС, ку е тепĕр çурта пĕрлехи ăшă трассипе çыхăнтариччен заказчиксем умне (НГДУ) хăш-пĕр техника условийĕсем каларса тăратать. Кунта та, икĕ çурта çыхăнтарни çине куçа "хупсан" виççĕмĕшĕ пирки требованисем хытăрах: малтан ĕçлекен ăшă пунктне икĕ насус вырнаçтармалла. Унсăрăн май çук, шутласа пăхнă тăрăх поликлиника, ветерансен çуртне тата Карл Маркс проспектĕнчи 1-мĕш номерлĕ çурта ăшă çитмест. Акă çу кунĕсем те иртсе пыраççĕ, НГДУ вара насус вырнаçтарма васкамасть, ку ăшă сетĕнче ĕçлекенсене хавхалантармасть ĕнтĕ.

Парăмсем çывăрма памаççĕ

Çак пурнăçри мĕнпур çитменлĕх укçа çуккипе çыхăннă. Çав ăшă сетĕнче ĕçлекенсенех июль уйăхĕ тĕлне 11625 тенкĕ дебитор парăмĕ пуçтарăннă. Çавна пула хăйсем те газовиксене 8 миллион тенкĕ парăма кĕнĕ, ĕç укçи памалли парăм 945 пин шутланать. Çапла майпа предприяти квалификациллĕ ĕçченсене çухатать, çур çулта кадрсем улшăнни 12 процент шутланнă. Ăшă сечĕ хăрушсăрлăхпа пĕрремĕш категорири предприятисен шутне кĕрет вĕт, çавăнпа та чи ансат специалистсене хатĕрлеме те чылай вăхăт тата укçа-тенкĕ кирлĕ.

Ăшă сечĕ пысăк хăватлăхпа ĕçлет. Пĕрремĕшĕнчен, нормăпа 1,2 километр тăршшĕ трасса вырăнне 2 километра çитет. Çакă ăшă сыхласа хăварассинче хушма йывăрлăхсем каларса тăратать. Иккĕмĕшĕнчен, вăл кирлинчен вăйлăрах та ĕçлет. Сăмахран, 1-мĕш номерлĕ котельнăй хăвачĕ 967 Гкал шутланать, чăннипе 10,3 Гкал ăшă парать. Кунта резерври хуран çук. 1-мĕш тата 4-мĕш номерлĕ котельнăйсене те ытлашши хăватпа ĕçлеме тӳр килет. Пĕрремĕш котельнăйра реконструкци ĕçĕсем пыраççĕ, 3 хуран вырнаçтарнă, бойлернăйне туса пĕтерме, технологи оборудованине вырнаçтарма чылай укçатенкĕ кирлĕ. Реконструкци ĕçĕсем сакăр çул пынине те шута илмелле. Ăшă сечĕ парăмсене пуçтарăпăр та çынсем пек пурăнма тытăнатпăр тесе хăйне лăплантармасть. Çавăнпа та парăма кĕнĕ организацисемпе бартерлă расчет тумалли çул-йĕр тупма тăрăшать. Ăшăтмалли сезон вĕçленсен НПТС кая хăварма юраман мероприятисен планне хатĕрленĕ, вăл пурĕ 1233742,35 тенкĕ парăма кĕнĕ предприятисене явăçтарсан пурнăçа кĕме пултарĕ. Çак плана администраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Ю.В.Терентьев çирĕплетнĕ, ăна кирлĕ адрессемпе ярса параççĕ тата ĕçлĕ канашлусем ирттереççĕ. Ыйтусене татса памалли çакăнтан лайăхрах çул-йĕр çук та пек, парăма кĕнисен çак плана ырламалла кăна ĕнтĕ. Анчах акă мĕн тĕлĕнтерет: август уйăхĕн çурри çитрĕ пулин те, темиçе предприяти çеç çак плана пурнăçа кĕртме пуçланă: "Татагропроммехмонтаж" ПМК 300 метр икçĕр миллиметрлă пăрăх панă, машинăсем тăвакан завод материалсем уйăрса парать, резерври шыв пăрăхне кĕртме пулăшать, райпо электродсемпе пулăшать... урăх çук та!

Çапла май çак темăпа пыракан калаçу вĕçленнĕ, ыйтусемпе парăмсем НПТС çинче юлаççĕ... Çапах çакăн çумне тата теприне хушма пулать. Кашни çулах çуркунне потребительсем тумалли ĕçсене палăртаççĕ, вĕсене хутса ăшăтмалли вăхăтчен пурнăçа кĕртмелле. 85 потребитель-организацирен пĕри те халиччен те хăйсен ĕçĕсене акт тăрăх пама тытăнманха. Юлашки срок вара - августăн 15-мĕшĕ.

Хуçалăх ӳсет

Çав вăхăтра ăшă сечĕсен Нурлатри предприятийĕ ӳссе пырать. Кăçал кунта икĕ котельнăй баланса илмелле: чугун çул поселокĕнчи НГЧ тата пурне те паллă МСО. Пĕрремĕшĕнче икĕ котельнăй: çĕннине туса пĕтересси паллă мар, ĕçе чарса лартма шутлаççĕ, çак сăлтава пула киввине хута ярĕç. Кивви вара мазутпа та кăмрăкпа ĕçлет, çавăнпа ăшă хăйхаклăхĕ пысăк. Ăна малашне газ çине куçарни питĕ пысăк тăкаксем каларĕ. МСО котельнăйне газпа ăшăтамалла тăваççĕ пулин те, апрель уйăхĕнчех рабочисене салатса янă организацире тирпейсĕрлĕх хуçаланать: котельнăйне, хурансене юсамалла, çĕнĕ ĕçченсем шырамалла, вĕсене вĕрентмелле, парăма кĕмелле... кĕскен каласан - предприяти мĕн чухлĕ пысăкрах, ыйтусем те çавăн чухлĕ нумайрах...

Предприяти вара пурăнать

Çакăн пек тĕплĕн каласа панă хыççăн вулакан НПТС кăçалтан ытла тытăнса тăраймĕ тесе шутлама пултарĕ. Çапах акă мĕн тĕлĕнтерет - предприяти пурăнма тата ĕçлеме хатĕр: котельнăйсене юсаççĕ, трассăсене çĕнетеççĕ. Кăçал кăна 4 ДКВР хуранĕ, ăшă улăштаракан 11 хатĕр юсавра пулнă, 4 насуса улăштараççĕ, 25-шне юсаса çĕнетеççĕ. Тата 44 электродвигателе юсаççĕ, котельнăйсенчи пăрăхсене тӳрлетеççĕ. Н.Воронин мастер ертсе пыракан бригада Козлов урамĕнчен пуçласа К.Маркс урамĕн 6-мĕш çурчĕ патне çитичченхи 400 метр тăршшĕ ăшă трассине улăштарать. К.Маркс проспектĕнчи трассăн 350 метрне çĕнетеççĕ. Çаплах 3-мĕш номерлĕ котельнăйран тухакан пăрăхсен 200 метрне çĕнетеççĕ, кĕскен каласан, кулленхи ĕçсене пурнăçлаççĕ. Анчах çак ĕçе вăхăтлă пурнăçламаççĕ, ялан кая хăварса пыраççĕ. Паллах, пĕлсе ĕçлесен, çĕнĕ технологисемпе ăста усă курсан оборудовани лайăх упранать. Çапах кашни агрегатăн усă курмалли срок пур (хурансен - 20 çул), предприятин çак мероприятисене пурнăçлама малтанах хатĕрленмелле.

Çакăн пек тĕслĕхсем кунта сахал мар. Хутса ăшăтмалли вăхăт çитиччен тĕплĕн хатĕрленмелле, кирлĕ мерăсем йышăнмалла. Çанталăк сивĕтсенех потребитель чи малтан ăшăтакан батарейăсем патне туртăнать вĕт. НПТС пĕр тĕллеве тĕпе хурса ĕçлет. Хулара пурăнакансен шанăçне тӳрре каларса вĕсене ăшăпа тивĕçтермелле. Халĕ вара çак ыйтăва татса парасси потребительсенчен те нумай килнине пурте ăнланчĕç пулĕ ĕнтĕ. Хутмалли тапхăр çитиччен вăхăт нумай юлмарĕ пулин те, кăçпур-ха, хăш-пĕр ыйтусене татса пама вара кăмăл çеç кирлĕ. Кăмăл пулни питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ - ăшă та пурне те кирлĕ вĕт.

С.ХАЙРУЛЛИНА.

Çак калаçăва пĕтĕмлетме ыйтса эпир Нурлат хулин коммуналлă управленийĕн начальникĕ С.Г.Мулюков патне шăнкăравларăмăр. Унăн хуравĕ конкретлă пулчĕ.

- Статьяра ăшă сечĕсемпе çыхăннă ыйтусене лайăх çутатнă. Кашни çинче чарăнса тăрас мар тесе çакна калатăп: ПТС - хулари çынсене ăшăпа тивĕçтерекен предприяти. Хăйĕн умне лартнă задачăсене хăйех пурнăçлĕ. Мĕнле пулсан та, коллектив тăрăшĕ. Ăшăпа усă куракансемпе çак служба пĕр-пĕрне шанни кирлĕ. Çулерех асăннă ыйтусене илсен вара, вĕсене татса парассипе çыхăннă ĕçе вăйлатмалла. Кăрмăш микрорайонĕнче йĕрке тăвас тĕлĕшпе эпир "Нурлатнефть" НГДУ начальникĕ М.М.Хузин сăмах панине питĕ шанатпăр. Вăл пулăшсан, вĕри шыв та пулĕ. Марат Мухлисович çурçĕр микрорайонта насус вырнаçтарса лартас ыйтăва та татса пама манмĕ тетпĕр. "Сельхозтехника" пирки çакна каласшăн: кунта çĕнĕ руководитель А.В.Мулюков килсен лайăх улшăнусем пуçланчĕç, хĕл пуçланиччен халăха ăшăпа тивĕçтерес тĕлĕшпе вăл мĕнпур мерăсем йышăнма пултарассине пĕлсе тăратпăр. Çывхарса килекен хутмалли сезон çулерех асăннă мĕнпур организацисене çине тăрса ĕçлеме хистет. Ăшă сечĕсен предприятийĕ хăйĕн задачине пĕлтĕрхи шайра пурнăçлатăр, потребитель унăн ĕçĕпе кăмăллă пултăр тесен, кашни хăйĕнчен мĕн килнине тумалли çинчен манмалла мар.

телепрограмма

ПОНЕДЕЛЬНИК
17 АВГУСТА
«ТАТАРСТАН»

7.00 -8.00 "Чулпан".
18.35 Музыка ТРТ
18.45,20.45 "Җиһан".
19.00 "Мысли".
19.30 "Җәйге бакчада".
19.45,21.45 Новости.
20.00 "Күңелдә изге чишмә".
20.30 "Тамчы".
21.00 "Михайло Ломоносов".

ОРТ

15.00 18.00 23.25 Новости.
15.20 "Тин-Тин идет по следу".
15.45 Марафон-15.
16.05 Звездный час.
16.40 "Лето наших надежд".
17.10 "...До шестнадцати и старше".
17.30 "Вокруг света".

ВТОРНИК
18 АВГУСТА
«ТАТАРСТАН»

7.00-8.00 "Чулпан".
18.45,20.45 "Җиһан".
19.00 "Социальные приоритеты".
19.45,21.45 Новости.
20.00 "Замандаш".
20.30 "Элли - бәлли - бәү".
21.00 "Михайло Ломоносов".
22.35 "Бизнес - ТВ".

ОРТ

6.00 "Доброе утро".
9.00 12.00 15.00 18.00 0.45 Новости.
9.15 18.20 "Роксолана - пленница султана".
10.45Смехопанорама.
11.20 Домашняя библиотека.
11.30, 19.30 Угадай мелодию.
12.15 "Вместе".
13.00 "Эдгар и Кристина".
14.30 "Женские истории".
15.20 "Тин-Тин идет по следу".
15.55 Счастливый случай.

СРЕДА
19 АВГУСТА
«ТАТАРСТАН»

7.00-8.00 "Чулпан"
18.45,20.45 "Җиһан".
19.00 "Сельские будни".
19.30 Музыка ТРТ.
19.45,21.45 Новости.
20.00 "Карт - бланш".
20.30 "Элли - бәлли - бәү".
21.00 "Михайло Ломоносов".
22.35 "Точка опоры".

ОРТ

6.00 "Доброе утро".
9.00 12.00 15.00 18.00 0.40 Новости.
9.15 18.20 "Роксолана - пленница султана".
10.00 "Тема".
10.45 В мире животных.
11.20 Домашняя библиотека.
11.25 Джентльмен-шоу.
12.15 "Вместе".
13.00 "Сказание о Рустаме".
14.20 Легкая атлетика.
15.20 "Тин-Тин идет по следу".
15.45 "Классная компания".
16.15 Зов джунглей.

ЧЕТВЕРГ
20 АВГУСТА
«ТАТАРСТАН»

7.00-8.00 "Чулпан".
18.45,20.45 "Җиһан".
19.00 Концерт ансамбля Амвижелия.
19.30 "Эхо голоса твоего".
19.45,21.45 Новости.
20.00 "ГАИ - информ".
20.15 "Шигъри мизгелләр".
20.30 "Элли - бәлли - бәү".
21.00 "Михайло Ломоносов".
22.35 "Клуб Болл".

ОРТ

6.00 "Доброе утро".
9.00 12.00 15.00 18.00 1.55 Новости.
9.15 18.20 "Роксолана - пленница султана".
10.00 Человек и закон.
10.35 Пока все дома.
11.20 Домашняя библиотека.
11.25 19.30 "Эти забавные животные"
12.15 "Вместе".
13.00 "Сказание о Рустаме".
14.25 "Женские истории".
15.20 Мультсериал.
15.45 "Классная компания".

ПЯТНИЦА
21 АВГУСТА
«ТАТАРСТАН»

7.00-8.00 "Чулпан".
18.45,20.45 "Җиһан".
19.00 "Батулла дәресләре".
19.20 "Дин һәм тормыш".
19.45,21.45 Новости.
20.00 Концерт. Гали Ильясов.
20.30 "Элли - бәлли - бәү".
21.00 "Җомга көн кич белән".
22.00 "Шаян - шоу".

ОРТ

6.00 "Доброе утро".
9.00 12.00 15.00 18.00 0.45 Новости.
9.15 18.20 "Роксолана - пленница султана".
10.05 Клуб путешественников.
10.55 Смак.
11.15 Домашняя библиотека.
11.25 "Играй, гармонь любимая!".
12.15 Программа "Вместе".
13.00 "Рустам и Сухраб".
15.20 "Раз, два - горе не беда!".
16.55 "Улица Сезам".
17.25 "Чердачок Фрутти".
19.10 Здоровье.
19.45 "Поле чудес".
20.45 "Спокойной ночи, малыши!"
21.00 Время.
21.40 "Ко мне, Мухтар!".
23.20 Взгляд.
0.05 Кубок "Спартака-98". Полуфинал.

СУББОТА
22 АВГУСТА
«ТАТАРСТАН»

7.00-8.00 "Чулпан".
17.25 "Алтын алма".
18.45 "Җиһан".
19.00 "Бизнес ТВ".
19.45 Новости.
20.00 "Җыр бәйгесе".
20.30 "Видеоспорт-авто".
21.00 Зөлфәт Хәкимнең иҗат кичәсе.

ОРТ

8.00 "Эскадрон гусар летучих".
9.30 Мультфильм.
9.45 Слово пастыря.
10.00 15.00 17.50 Новости.
10.10 Домашняя библиотека.
10.30 "Утренняя почта".
11.05 "Каламбур".
11.40 Смак.
12.00 История одного шедевра.
12.35 "Овертайм".
13.30 "Горожане".
15.20 "Цивилизация".
15.50 В мире животных.
16.30 "Кот в сапогах".
16.55 Футбол.
18.55 "Большая перемена".
20.10 "Джентльмен-шоу".
20.45 "Спокойной ночи, малыши!".
21.00 Время.
21.40 "КВН-98".
23.55 Легкая атлетика.
1.00 Х.ф. "Приманка".

ВОСКРЕСЕНЬЕ
23 АВГУСТА
«ТАТАРСТАН»

7.00 - 8.00 "Чулпан".
18.30 "Видеоспорт".
18.45 "Телебуклет".
19.00 "ТОН".
19.40 "Автокалейдоскоп.
20.00 "Ханым".
20.30 "Элли - бәлли - бәү".
20.45 Зөлфәт Хәкимнең иҗат кичәсе.

ОРТ

8.00 "Эскадрон гусар летучих".
9.35 16.40 "Диснейклуб".
10.00 15.00 0.40 Новости.
10.10 "Непутевые заметки".
10.30 Пока все дома.
11.10 Утренняя звезда.
12.00 Армейский магазин.
12.30 "Играй, гармонь любимая!".
13.00 Крестьянские ведомости.
13.30 "Подводная одиссея команды Кусто".
14.25 Смехопанорама.
15.20 Клуб путешественников.
16.05 Футбольное обозрение.
17.35 "Колесо истории".
18.20 Песня-98.
19.05 "Ералаш".
19.15 "Орел и решка".
20.55 Киноафиша.
21.00 Время.
21.35 "Серебряная стрела".
23.55 Хоккей.

Экспресс-центр Экспресс-центр*** Экспресс-центр*** Экспресс-центр***

18.20 "Роксолана - пленница султана".
19.05 Час пик.
19.30 Угадай мелодию.
20.00 "Мы".
20.45 "Спокойной ночи, малыши!"
21.00 Время.
21.35 "Горец".
22.45 Кубок "Спартака-98".
0.25 "Приключение грижера".

РОССИЯ

7.00 8.25 14.30 Мультфильм.
7.15 Проснись.
7.30 11.00 14.00 17.00 20.00 22.30 23.10 0.0 Вести.
8.00 0.30 "Дежурная часть".
8.20 Рецепты.
9.10 "Православный календарь".
9.15 Старая квартира.
10.10 "Санта-Барбара".
11.30 "Грех".
12.35 Диалоги о животных.
13.30 Вовремя.
15.00 "Позвоните Кузе!"
15.30 "Собачий мир".
16.00 Башня.
16.30 "Первые поцелуи".
17.30 "Осторожно, модерн".
18.00 "Вихрь цветов".
18.55 Любовь с первого взгляда.
19.25 "Марьина роща".
20.30 Подробности.
20.45 Сам себе режиссер.
21.20 "Няньки".
23.00 "Дживс и Вустер".
0.45 Автошоу.

16.40 "Лето наших надежд".
17.10 "...До 16 и старше".
17.30 "Вокруг света".
19.05 Час пик.
20.00 "Тема".
20.45 "Спокойной ночи, малыши!"
21.00 Время.
21.35 "Аляска, сэр!".
23.40 Легкая атлетика.

РОССИЯ

7.00 8.15 14.30 "Веселая карусель".
7.15 Проснись.
7.30 11.00 14.00 17.00 20.00 0.00 Вести.
8.00 0.30 "Дежурная часть".
9.10 "Православный календарь".
9.15 Старая квартира.
10.10 "Санта-Барбара".
11.30 12.35 "Грех".
15.00 "Позвоните Кузе!"
15.30 "Ссбачий мир".
16.00 Башня.
16.30 "Первые поцелуи".
17.30 "Осторожно, модерн".
18.00 "Вихрь цветов".
18.55 Кроссворд.
19.25 "Марьина роща".
20.30 Подробности.
20.45 "Добрый вечер".
21.20 "Искушение".
0.45 Живая коллекция.

16.40 "Лето наших надежд".
17.10 "...До шестнадцати и старше".
17.30 "Вокруг света".
19.05 Час пик.
19.30 "Золотая лихорадка".
20.10 Человек и закон.
20.45 "Спокойной ночи, малыши!"
21.00 Время.
21.35 "Черный квадрат".
23.55 "Марихуана. Рейс с Байконура". Дело 1998 года.

РОССИЯ

7.00 8.25 14.30 Мультфильм.
7.15 Проснись.
7.30 11.00 14.00 17.00 20.00 0.00 Вести.
8.00 0.30 "Дежурная часть".
8.20 "Стронг" представляет.
8.25 "На заметку".
9.10 "Православный календарь".
9.15 Старая квартира.
10.10 "Санта-Барбара".
11.30 "Шумный день".
13.05 Диалоги о животных.
15.00 "Позвоните Кузе!".
15.30 "Собачий мир".
16.00 Башня.
16.30 "Первые поцелуи".
17.30 "Осторожно, модерн".
18.00 "Вихрь цветов".
18.55 Кроссворд.
19.25 "Марьина роща".
20.30 Подробности.
20.45 "Аншлаг" представляет.
21.20 "Мачеха".
23.00 "Агата Кристи. Пуаро".
0.45 Легкая атлетика.
1.45 Горячая десятка.

16.10 Волшебный мир, или Синема.
16.40 "Лето наших надежд".
17.10 "...До 16 и старше".
17.30 "Вокруг света".
19.05 Час пик.
20.05 В поисках утраченного.
20.45 "Спокойной ночи, малыши!"
21.00 Время.
21.35 "Из жизни Федора Кузькина".
0.50 Легкая атлетика.

РОССИЯ

7.00 8.25 14.30 Мультфильм.
7.15 Проснись.
7.30 11.00 14.00 17.00 20.00 0.00 Вести.
8.00 0.30 "Дежурная часть".
8.20 "Стронг" представляет.
8.25 "На заметку".
9.10 "Православный календарь".
9.15 Старая квартира.
10.10 "Санта-Барбара".
11.30 "Муссолини. Последний акт".
12.40 Диалоги о животных.
13.40 На дорогах России.
15.00 "Позвоните Кузе!"
15.25 Легкая атлетика.
16.00 Башня.
16.30 "Первые поцелуи".
17.30 "Осторожно, модерн".
18.09 "Вихрь цветов".
18.55 "Лабиринт".
19.25 "Марьина роща".
20.30 Подробности.
20.45 Маски-шоу.
21.35 "Две ночи с Клеопатрой".
23.00 "Притворщик".
0.45 Сиреневый туман.

8.00 "Эскадрон гусар летучих".
9.30 Мультфильм.
9.45 Слово пастыря.
10.00 15.00 17.50 Новости.
10.10 Домашняя библиотека.
10.30 "Утренняя почта".
11.05 "Каламбур".
11.40 Смак.
12.00 История одного шедевра.
12.35 "Овертайм".
13.30 "Горожане".
15.20 "Цивилизация".
15.50 В мире животных.
16.30 "Кот в сапогах".
16.55 Футбол.
18.55 "Большая перемена".
20.10 "Джентльмен-шоу".
20.45 "Спокойной ночи, малыши!".
21.00 Время.
21.40 "КВН-98".
23.55 Легкая атлетика.
1.00 Х.ф. "Приманка".

РОССИЯ

8.00 16.30 Спортивная программа.
9.30 "Лабиринт".
10.00 Доброе утро, Страна!
10.45 Кроссворд.
11.10 "Почта РТР".
11.40 "Любовь с первого взгляда".
12.05 Подиум д"Арт.
12.30 "Домашний очаг".
13.00 "Неделя в Санта-Барбаре".
14.00 20.00 Вести.
14.30 "Люди и деньги".
15.00 Федерация.
16.00 Башня.
18.55 Моя семья.
20.30 "Любовь с привилегиями".
22.50 Звезды XXI века.
0.10 "Слезы Святого Петра".
1.55 Адамово яблоко.

РОССИЯ

8.00 "Красная книга".
8.30 "Служу Отечеству!"
9.00 Утро крестьянина.
9.30 Вовремя.
10.00 Доброе утро, Страна!
10.45 Сам себе режиссер.
11.15 Русское лото.
11.55 "Аншлаг" представляет.
12.20 "Городок".
12.45 "Мир книг с Л.Куравлевым".
13.00 "Неделя в Санта-Барбаре".
14.00 Вести.
14.30 Спортивная программа.
16.00 "Закон и порядок".
16.50 Диалоги о животных.
17.45 Совершенно секретно.
18.40 Старая квартира.
20.00 Зеркало.
20.55 "Калейдоскоп".
22.40 "Агата Кристи. Пуаро".
23.40 "К-2" представляет.
0.35 Легкая атлетика.
1.35 Гала-концерт "Три цвета музыки".

Редакцие çыраççё тата шăнкăравлаççё

Телейлё туйма нумай кирлё-и?

Ку çу пире нумай ăшă, хёвел парнелет. Тен, çавăнпа пулё манăн хамăн юратнă Çарăмсан юханшывне темиçе йёрке халаллас килчё.

* * *

Çарăмсан маншăн мёнпур енчен питё хаклă тата çывăх. Çуллахи Çарăмсан вара тата та илёртӳллёрех. Кăçалхи шăрăх кунсенче кунта канма питё лайăх, шыва кёме пулать, паллах, шывра ишме пёлсен тата юратсан вара ырлăх.

Ишнё чухне тăвакан упражненисем мёнпур ӳт-пёве лăплантараççё, кантараççё, çаплах мышшăсем çирёпленеççё.

Ăслă-тăнлă ашшё-амăшёсем шыва кёме ачисемпе пёрле пыраççё. Çакă вара вёсене шывра хăйсене шанчăклăрах тытма пулăшать.

Хăвасемпе вёренесем ӳсекен хăйăрлă çыран хёрринче ачасен тата аслисен хаваслă сасси илтёнет. Чулпан ялёнче пурăнакансен шыва кёмелли хăйсен юратнă вырăнё пур.

Шыва кёнё чухне çурăм çинче ишнине вара нимёнпе те танлаштарма май çук пулё. Васкамасăр, таса пёлёт çинелле пăхса ишнё май, ирёксёрех пуçа çакăн пек шухăш пырса кёрет: хăвна телейлё туйма нумай кирлё-и?

Пёррехинче пёр палламан хёрарăм:

- Этеме телейлё пулма нумай кирлё мар, терё.
- Çапла, - килёшрём эпё.
- Ачалăх та яланах санпа пёрле çӳретёр, - хушса хучё вăл кулса.
- Çук, иштёр, ун чухне тата аванрах пулё, терё калаçăва хутшăнса тепёр хёр.

Г.ПАРГУНЬКИНА.
Чулшан ялё.

Ватăсем тав тăваççё

Çу пуçламăшёнче сахăр вёретекенсен поселокёнче хăпартакан мечётён минаретне вырнаçтарни пирён урама уйрăмах илемлетет. Эпир, ватă çынсем, çак пархатарлă ёçе хутшăннисене пурне те тав тăвасшăн. Нумай предприятипе организаци, хуçалăх аяккинче юлмарёç. Уйрăмах эпир "Татнефть - Нурлатнефтешырав" ООО директорне А.С.Насолдина, кунта ёçлекен Х.Ю.Аюпова, Р.Р.Махмутова, çаплах слесарьсене, сварщиксене тата ыттисене тав тăвасшăн. Эпир вёсене çирёп сывлăх, çемьере телей, ырлăх сунатпăр.

Тёне ёненекенсен ятёнчен
Г.МУГАЙНУТДИНОВ,
вăрçă инваличё.

Ёç вырăнтан хускалман

Хисеплё редакци! Сирён пата Заводской тăкăрлăкёнчи 9-мёш номерлё çуртра пурăнакансем çыраççё. Пирён çурт çёнё, кунта эпир пурё те 3 çул кăна пурăнатпăр-ха. Пёлтёр çулла çутçанталăк газё кёртме тытăнчёç. Уйăх хушши монтаж ёçёсене пурнăçларёç. Эпир пёлнё тăрăх, газовиксен бригади Пёкёлмерен килнё. Монтаж ёçёсене вёçлемесёрех, таçта кайса çухалчёç, кăçал май уйăхёнче вёсем пирён çурта аса илнё те килсе монтаж ёçёсене вёçлерёç. Çавăн чухне начальникё хăй хваттерсем тăрăх çӳресе 400-шер пин (деноминацилеменнипе) пуçтарчё, майăн 1-мёшё тёлне газпа усă курма тытăнасса шантарчё. Август уйăхё пуçланчё, анчах та йӳнё топливăпа хăçан усă курма тытăнасси пăхса та курăнмасть-ха. Пиртен укçа пуçтарнă начальник хăйён бригадипе таçта кайса çухалчё. Пирён газ пăрăхёсем вара вёсемпе çутçанталăк газё хăçан килессе кётеççё. 45 хваттерлё çуртра пурăнакансем газовиксем пире, потребительсене, хисеплеменнин сăлтавне мёнре-ши - тесе редакцие пулăшма ыйтаççё.

ГАЗИЗОВА,
МУСИНА,
МУХАМАДЕВА,
МУХАМЕТШАРИФОВА,
МАГИЗОВА.
Пурё 43 çын алă пуснă.

Çыхăну темипе

Телефонсем шăнкăртатмаççё...

Хисеплё редакци, аван-и! Сиртен Çёнё Амзя ялёнче пурăнакансем пулăшу ыйтаççё. Пирён телефонсем апрель уйăхёнченпех ёçлемеççё. Çыхăну узелне темиçе хутчен те пёлтернё, вёсен вара яланах пёр хурав: кабель улăштармалла, ку вара нумай вăй хумалли ёç, укçа кирлё. Мён тумалла, ку ёçе ялан кая хăварса пымалла-и? Пирён вара мён хăтланмалла? Тархасшăн, пирён ыйтăва çыхăну узелён ертӳçине пёлтерёр-ха.

Халăх ыйтнипе -
И.НАБИУЛЛИН.

Радио та шарламасть

Алло, редакци-и? Сире Тёрнеç ялёнче пурăнакан Зуфар Сафин пенсионер чăрмантарать. Пирён çакăн пек ыйту: пирён патри радио сечё хăçан ёçлеме тытăнассине татса пама пулăшăр-ха, тархасшăн? Районти çыхăну узелё мёнле-тёр тăватă программăллă радио вырнаçтарать теççё. Кун çинчен ăçта ыйтса пёлме пулать-ши? Эпир радио та туянăттăмăр, усă курнăшăн та тӳлёттёмёр, пёр кăлтăксăр кăна каласăрччё. Пенсионерсенчен чылайăшё ман шухăшпа килёшёç тесе шутлатăп.

Пёлтерӳсем

ВАЗ-2105 сутăнать. Адрес: Вăтам Хăмăшлă ялё, телефон: 2-35-44.

* * *

Строительсен урамёнче икё пӳлёмлё хваттер сутăнать. Нӳхреп, сарай, мунча пур, 15 пин тенкё. Ыйтса пёлмелли адрес: Суворов урамё, 5.

* * *

Хула варринчи икё пӳлёмлё хваттер (лайăх юсанă, 68 пин тенкё), 1996 çулта туса кăларнă ВАЗ-21083 (22 пин тенкё), 1995 çулта туса кăларнă ВАЗ-2121 "Нива" (20 пин тенкё) сутатпăр. Адрес: Гагарин урамё, 12-2 е ГАИ патёнчи СТО.

* * *

Бугуруслан хули варринчи çуртăн çуррине (шыв, канализаци, хуралтăсем пур, газпа йăлăтмалла) Нурлат хулинчи пёр пӳлёмлё хваттерпе улăштаратăп. Телефонсем: 5-33-97, 5-12-69.

* * *

Хула варринче икё пӳлёмлё хваттер сутăнать. Телефон: 2-17-57.

* * *

Маларах Кăрмăш патёнче сутнă строительство материалёсене августăн 13-мёшёнчен япала сутакан пасар территорийёнче сутёç.

Пасар администрацийё.

* * *

Çёр кăмрăкё сутăн илетёп. Телефон: 5-33-97.

* * *

Пёр пӳлёмлё хваттере васкавлă сутатпăр. Телефон: 4-12-02, 17 сехетрен пуçласа 20 сехетчен шăнкăравламалла.

* * *

Афган поселокёнче 8х8 пысăкăш пура, 10 сотка участок сутатпăр, хаклă мар. Телефон: 5-24-62.

* * *

Пёчёк ачаллă çемье хваттер тара илет. телефон: 2-21-69.

* * *

ВАЗ-21061 сутăнать, хаклă мар. Телефон: 5-10-15, 16 сехетрен пуçласа 18 сехетчен шăнкăравламалла.

* * *

Организаци йӳнё хакпа "Стинол" холодильниксем сутать: "Стинол" -101L - 2.070 тенкё, 102L - 2.900, 107L - 2.470, 116L - 2.285, 110L - 2.640. Çаплах ГАЗ-53 (будка) автомобиль сутăнать, хакё калаçса татăлнă тăрăх, бартер тума май пур. Адрес: Кушкă ялё, автовокзал патёнчи "Автозапчасти" магазин. Телефонсем: 2-33-64 (ёçри), 2-14-99 (килти).

Яланах! Йӳнё!

Италире, Германире, Польшăра туса кăларнă кухня гарнитурёсем, стенкăсем, кёнеке сётелёсем, çемçе сётел-пукан сутатпăр. Леçсе тата пуçтарса паратпăр. Телефон: 5-22-20.

Лицензи номерё Б-97 004778.

Р.ГИЛЬМУТДИНОВ фотоэтючё.

Пёлтерӳ

Сирён тиевёре КамАЗ автомобильсемпе кирлё çёре çитеретпёр (10 тонна). "Альянс" магазинта ыйтса пёлмелле.

"Альянс" магазин (апат-çимёç пасарё), "Елена" магазин (япала сутакан пасар) тёрлё моделлё (17 тёрлё) СТИНОЛ, НОРД холодильниксем, сивётекен камерăсем, витринăсем сутаççё. Гаранти 2 çул, тӳлевсёр леçсе паратпăр. Çаплах сутлăхра телевизорсем, магнитофонсем, музыка центрёсем пур. Хаксене йӳнетнё. Свидетельство Б-621. Телефон: 5-41-19.

Пахчаçăсен "Локомотив" юлташлăхёнче дача участокё, çёнё "Урал" мотоблок, Тельман урамёнче гараж сутатпăр. Телефон: 2-19-77, 8 сехетрен тытăнса 17 сехетчен шăнкăравламалла.

Августăн 18-мёшёнчен пуçласа 21-мёшёччен районти культура çуртёнче 9 сехетрен пуçласа 17 сехетчен "Ильдан" фирма таварёсен суту-илӳ ярмăркки пулать. Хаксене 10 процент чакарнă.

Сутлăхра:
- **хёллехи пальто, çухисем тёрлё тиртен;**
- **тиртен çёленё пальто;**
- **тир çёлёксем;**
- **кёрёксем, тир курткăсем;**
- **кёркуннепе çуркунне тăхăнмалли пальто.**

Тёп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.
Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районён администрацийёпе редакцин ёç коллективё

Хаçат эрнере виçё хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тутарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРЁН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамё, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителё тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçён пайё - 2-10-44, редактор заместителё, явапăлă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжё енёпе ёçлекен заместителё - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжё енёпе ёçлекен заместителё - 2-10-44, ялхуçалăх пайё, промышленность, çырусемпе массăлла ёç пайё - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайё тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информацине печет министерствинче шута илнё.

Регистрациленё номерё 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 3265